24-мӗш çул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 ЯНВАРЬ 31 ШАМАТКУН 26(6051) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Кӑнтӑр-Хӗвеланӑç тата Кӑнтӑр фрончӗсенчи войскӑсем Барвенково, Лозовая хулисене йышӑннӑ

Пирӗн войскӑсен трофейисем

1942 çулти январӗн 18-мӗшӗнче Кӑнтӑр-Хӗвеланӑç тата Кӑнтӑр фрончӗсенчи войскӑсем наступлени пуçласа янӑ. Хаяр çапӑçусем хыççӑн пирӗн войскӑсем противникӑн çирӗплетнӗ линине шӑтарса кӗнӗ те малалла куçса пыма тытӑннӑ. Задание пурнӑçа кӗртсе пырса, пирӗн войскӑсем январӗн 18-мӗшпе 27-мӗш хушшинче 100 километр ытла малалла кӗрсе кайса БАРВЕНКОВО, ЛОЗОВАЯ хулисене йышӑнса илнӗ. Халӑх пурӑнакан 400 ытла пункта ирӗке кӑларнӑ.

Январӗн 18-мӗшпе 27-мӗш хушшинче Кӑнтӑр-Хӗвеланӑç тата Кӑнтӑр фрончӗсенчи войскӑсем çакӑн пек трофейӑсем ТЫТСА ИЛНӖ: орудисем—658, танксемпе бронемашинӑсем—40, пулеметсем—843, минометсем—331, автомашинӑсем—6.013, мотоциклсем—513, велосипедсем—1.095, радиостанцисем—23, минӑсем—100.000 ытла, снарядсем—80.000 яхӑн, патронсем—1 миллион ытла, телефон кабелӗ—100 километр ытла, алӑпа пемелли гранатӑсем—23.000, боеприпассем тата çар пурлӑхӗ тиенӗ вагонсем—430, çарпа хуçалӑх грузӗсем тиенӗ эшелонсем—8, çар пурлӑхӗн склачӗсем—24, лавсем—2.400 тата лашасем—2.800.

Çав вӑхӑт хушшинчех ПӖТЕРСЕ ТӐКНӐ: танксем—28, орудисем—36, минометсем—47, пулеметсем—7, чугунçул вагонӗсем—133, горючи цистернисем—4, паровозсем—2, автомашинӑсем—1071, лавсем — 713, ДЗОТ-сем—50, самолетсем—25.

Противникӑн 298-мӗш, 68-мӗш, 257-мӗш дивизийӗсене, 236-мӗш противотанковӑй полкне, 67-мӗш дивизири 179-мӗш пехотнӑй полкне, венгерсен кавалери полкне пӗтӗмӗшпех çӗмӗрсе тӑкнӑ. Пехотӑн 257-мӗш дивизин штабне çӗмӗрсе тӑкнӑ, дивизи штабӗн документчӗсене тытса илнӗ. Пехотӑн 457-мӗш, 516-мӗш полкӗсен ялавӗсене тытса илнӗ. Пехотӑн 44-мӗш тата 295-мӗш дивизийӗсене тата пехотӑн 62-мӗш, 46-мӗш, 94-мӗш дивизисен чаçӗсене чылай пысӑк поражени кӳнӗ.

Январӗн 18-мӗшпе 27-мӗш хушшинче нимӗçсене 25.000 çынна ытла вӗлернӗ тата темиçе çӗр çынна тыткӑна илнӗ.

Нимӗç оккупанчӗсене хирӗç пынӑ çапӑçусенче генерал-майор Городнянский, генерал-лейтенант Рябышев тата генерал-майор Грицко войскисем хӑйсене уйрӑмах палӑртнӑ.

СОВЕТ ИНФОРМАЦИ БЮРОВӖ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Январӗн 29-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Январӗн 29-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противника хирӗç вӑйлӑн çапӑçнӑ. Нимӗçсен фашистла войскисем хӑшпӗр участоксенче контратака тума хӑтланнӑ, çав контратакӑсене, противника пысӑк çухатусем кӳрсе, сире-сире пӑрахнӑ. Пирӗн чаçсем каллех малалла куçнӑ, халӑх пурӑнакан темиçе пункта, вӗсен шутӗнче **Сухиничи, Мятлево** (Хӗвеланӑç фрончӗ), **Лозовая** (Кӑнтӑр-Хӗвеланӑç фрончӗ), **Барвенково** (Кӑнтӑр фрончӗ), хулисене йышӑнса илнӗ.

Январӗн 28-мӗшӗнче нимӗçсенне сывлӑшри çапӑçусенче 12 самолет персе антарнӑ тата аэродромсем çинче 15 самолет пӗтерсе тӑкнӑ. Пӗтӗмпе çав кун нимӗçсен 27 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 8 самолет пӗтнӗ.

* * *

Январӗн 28-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаçӗсем нимӗçсен 9 танкне, пехотӑпа грузсем турттарса пыракан 335 автомашинине, боеприпассем тиенӗ 100 яхӑн лавне, 10 полевой орудине прислугисемпе пӗрлех, горючи тултарнӑ автоцистернине, икӗ тягачне пӗтерсе тӑкнӑ. Противник пехотин 5 батальонне сапаласа янӑ, пӗр пайне вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Боричев юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсем (Хӗвеланӑç фрончӗ) Александрово тата Мокрое ялӗсене йышӑнса илнӗ, тӑшманӑнне 24 броневик, 5 çӑмӑл машина, 3 мотоцикл тата ытти трофейӑсем нумай тытса илнӗ. Фронтӑн тепӗр участокӗнче Орлов юлташ командир пулса ертсе пыракан пирӗн часть, противникӑн оборона валли тунӑ рубежӗсене сирсе пӑрахса, малалла куçнӑ, тӑшманӑнне 15 автомашина, 9 пулемет, тягач, темиçе мотоцикл тата лавсем тытса илнӗ.

* * *

Кӑнтӑр-Хӗвеланӑç фронтӗнче кӗрешекен пирӗн пӗр часть, икӗ кун хушши çапӑçса, гитлеровецсене халӑх пурӑнакан 11 пунктран хӑваласа кӑларнӑ. 2 ялшӑн пынӑ çапӑçура кӑна нимӗçсен салтакӗсем 500 çынна яхӑн вилсе пӗтнӗ. Пирӗн часть трофейӑсем нумай тытса илнӗ. Фронтӑн тепӗр участокӗнче Кутлин юлташ командир пулса ертсе пыракан часть нимӗçсенне 25 автомашина, 300 винтовка, 9 пин снаряд, 50 лаша, çар пурлӑхӗсен складне, икӗ паровоз тата груэсем тиенӗ 15 вагон тытса илнӗ.

* * *

Купцов лейтенантӑн батарейи юлашки кунсенчи çапӑçусенче тӑшман пехотин ротине пӗтерсе тӑкнӑ, 5 блиндажа аркатнӑ тата минометсен 4 батарейине пусарса лартнӑ. Шапов лейтенантӑн батарейи 10 блиндажа, пехотӑн взводне, минометсен икӗ батарейине тата противникӑн наблюдательнӑй пунктне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Уя тӑшман хурса хӑварнӑ минӑсенчен тасатакан Горянкин лейтенантӑн подразделенийӗ çине нимӗç автоматчикӗсен взвочӗ пырса тапӑннӑ. Горянкин юлташ нимӗçсене 30—40 метра çити сывӑха янӑ та хӑйӗн боецӗсене атакӑна илсе кайнӑ. Фашистсен взводне пӗтӗмпе тенӗ пекех пӗтерсе тӑкнӑ. Красноармеец Башнин çав çапӑçура фашистсен 5 салтакне чиксе вӗлернӗ.

* * *

Пирӗн войскӑсем нимӗçсен 37-мӗш пехотнӑй полкӗн секретлӑ документчӗсене тытса илнӗ. Çав документсем хушшинче нимӗçсен 37-мӗш пехотнӑй полкӗн 1941 çулти декабрӗн 21-мӗшӗнче ятарласа кӑларнӑ приказӗ çумне хушса çырнине тупнӑ. Приказ çумне хушса çырнин пӗрремӗш параграфӗнче çапла каланӑ: «Хӗçпӑшал тытма пултаракан арçынсене, 17 çултан пуçласа 50 çула çитиччен хисене, тыткӑна илнисен шутне кӗртсе, вӗсене тыткӑна илнисене пухмалли пункта ямалла», тенӗ. Оккупациленӗ районсенче юлнӑ мирлӗ халӑха концентрациллӗ лагерьсене ярса, гитлерла çынçиенсем вӑрçӑ туса пымалли пур законсемпе йӗркесене те тискеррӗн пӗтерсе лартаççӗ. Совет хулисемпе ялӗсенчи вырӑнти халӑха концентрациллӗ лагерьсене хӑваласа кайса, çав халӑха тыткӑна илнисен шутне кӗртекен гитлеровецсем хӑйсем мошенниксем пулса тӑнине çак приказпа тепӗр хут кӑтартса пачӗç.

* * *

Нимӗçсен тыткӑна лекнӗ салтакӗ, полевой жандармери шоферӗ Кремзер çапла каласа панӑ: «Хӑйсен чӗлхисене чарайман салтаксене часах арестлеççӗ. Нумаях та пулмасть пӗр салтак хӑйӗн юлташӗсене: пирӗн ӗçсем фронтра чаплӑ мар, тенӗ. Çавӑн çинчен тахӑшӗ кайса каланӑ та, вара ӑна çав кунах тытса кайса таçта чикрӗç».

* * *

Нимӗçсен 124-мӗш полкӗнчен тыткӑна лекнӗ обер-лейтенант Чепп çапла каласа панӑ: «Аманса сывалнӑ хыççӑн Венӑран хамӑн полка таврӑнсан, эпӗ тӗлӗнсех кайрӑм. Кӗске вӑхӑт хушшинчех чаçӑн пите пысӑк çухатусем пулнӑ. Эпӗ командир пулнӑ ротӑра 150 салтакран 20—30 çын анчах тӑрса юлнӑ».

* * *

Курск облаçӗнчи Самсоновка ялӗнчен каялла чакса тухнӑ чухне гитлерла çынçиенсем халӑхӑн пӗтӗм апатçимӗçне, арçынсемпе хӗрарӑмсен тата ачасен çипуçӗсене, чашӑк-тирӗксене пуçтарса тухса кайнӑ. Колхозниксенчен çӑматӑсемпе кӗрӗк пиншаксене хывса илнӗ. Çавӑн хыççӑн ялти 72 çурта пурне те вут тивертсе хӑварнӑ. Бандитсем ялти 12 çынна тискеррӗн вӗлернӗ, нумайӗшне суранланӑ. Персе вӗлернӗ çынсем хушшинче ачасем те пур: 4 çулти Синяев Витя, 7 уйӑхри Синяева Валя, 5 çулти Васкевич Володя.

* * *

Германири халӑх Гитлерӑн вӑрçӑпа выçлӑх режимне хирӗç хытӑраххӑн та хытӑраххӑн сасӑ пама тытӑнать. Фашистла хаçат «Берлинер локальанцэйгер» нимӗçсене лӑплантарас шутпа статья пичетлесе кӑларнӑ. «Хӗрарӑмсем,—тесе çырать хаçат,—час-часах киле пушӑ карзинкӑсемпе таврӑнаççӗ те: «паян каллех çӗрулми çук», тесе ӳпкелешеççӗ. Çынсем çӗрулми çукшӑн пӑлханаççӗ. Мӗншӗн вӗсем пӑлханаççӗ? Лавкасенче çӗрулми мӗншӗн çуккине никам та пытармасть вӗт-ха». Малалла гитлерла листок çӗрулмине мӗнле перекетлесе тытмаллине кӑтартакан кино-фильм тухасси çинчен пӗлтерет.

Çапла вара гитлеровецсем Германин выçса вилме пуçланӑ халӑхне апат-çимӗç парас вырӑнне апат-çимӗç мӗншӗн çукки çинчен ӑнлантарнипе тата апат-çимӗç çук чухне мӗнле пурӑнмалли çинчен кино картинӑсем кӑтартнипе тӑранса пурӑнма хушать.

Январӗн 30-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Январӗн 30-мӗш ыран тенӗ чух çӗрле совет войскисем, нимӗçсен фашистла войскисене хирӗç çапӑçса, малалла наступлени туса пынӑ.

* * *

Пирӗн стрелковӑй часть (Хӗвеланӑç фрончӗ) тӑшманӑн пысӑк аэродромӗшӗн пынӑ çапӑçура противникӑнне 12 самолет пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Кӑнтӑр фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн боецсем пӗр кун хушшинче халӑх пурӑнакан 30 пункта нимӗçсенчен ирӗке кӑларнӑ тата 6 оруди, 14 пулемет, 3 миномет, 700 велосипед, 30 лаша, 116 пин патрон, 400 снаряд, 700 мина тытса илнӗ. Халӑх пурӑнакан пунктсенчен пӗрин патӗнче кӑна противник хӑйӗн салтакӗсемпе офицерӗсен 200 виллине пӑрахса хӑварнӑ.

* * *

Калинин фрончӗн уйрӑм участокӗсенче пирӗн боецсем халӑх пурӑнакан 35 пункта нимӗç оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ. Тытса илнӗ трофейӑсем хушшинче—пӗр самолет, 2 оруди, 91 автомашина, 14 пулемет, 7 мотоцикл, автоматсемпе минометсем, 430 лаша, продовольстви тиенӗ обоз, автомобильсемпе продовольстви тата обмундировани тиенӗ 28 вагон, фураж склачӗ. Гитлеровецсем чӗрӗ вай тӗлӗшпе питех те пысӑк çухатусем тӳснӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Батарея командирӗ Лебедев лейтенант тӑракан наблюдательнӑй пост патнелле нимӗçсен колонни сывхарса пынӑ. Лебедев юлташ, хӑй пӗтессинчен шикленмесӗр, пирӗн батарейӑсене хӑй тӑракан вырӑн тӗлнелле пеме хушнӑ. Фашистсен колоннине çапла майпа çапса аркатнӑ. Аманнӑ пулин те, Лебедев юлташ пострах тӑнӑ.

* * *

Ленинград облаçӗнчи партизансен темиçе отрячӗ, тӑшмана хирӗç пӗрле кӗрешес шутпа пӗрлешсе, халӑх пурӑнакан Х. ятлӑ пысӑк пункт çине кӗтмен çӗртен пырса тапӑннӑ. Çӗрлехи çапӑçура партизансем нимӗçсен салтакӗсемпе офицерӗсене 150 çынна вӗлерсе пӗтернӗ, тӑшманӑнне 4 грузовой машина, 2 радиостанци, çыхӑнӑвӑн чугунçул станцинчи пысӑк узелне тата противникӑн йывӑçпа çӗртен купаласа тунӑ темиçе огневой точкине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Нимӗçсен 266-мӗш полкӗнчен тыткӑна парӑннӑ салтак Макс Лефлер çапла каласа панӑ: «Юлашки вӑхӑтра эпӗ çапла шухӑшлама тытӑнтӑм: мӗншӗнха манӑн хамӑн шуçа пуля айне чикмелле? Мӗншӗн-ха манӑн хамӑн нимӗн хирӗçмелли те çук çынсенех вӗлермелле? Çак инкекрен тухма мӗнле те пулин май тупмалла пулнӑ, вара эпӗ Хӗрлӗ Çар енне куçма шут тытрӑм. Салтаксем нумайӗшӗсем совет листовкисемпе пропусксене тытса усраççӗ, тыткӑна парӑнма майлӑрах самант пулассине кӑна кӗтеççӗ».

* * *

Калинин облаçӗнчи Чибикино ялӗнчен каялла чакнӑ чухне нимӗçсен фашистла мерзавецӗсем 16 çулти Петя Клязева унӑн пиччӗшӗ Хӗрлӗ Çарӑн лейтенанчӗ пулнишӗн çакса вӗлернӗ. Çак ялти 90 килтен нимӗçсем 85 кил çунтарса янӑ. Пушара сӳнтерме пӑхакан çынсене гитлеровецсем автоматсенчен пере-пере пӑрахнӑ.

* * *

Алтай горнякӗсем руда кӑларас ӗçе кунран кун вӑйлатса пыраççӗ. Лениногорск рудникӗнчи бурильщик сменӑри задание 3.632 процент тултарнӑ. Сокольнӑй рудникӗнчи бурильщик Дмитрий Овчарук сменӑра 3.130 процент тунӑ.

Кашни артелӗн графика тултарса пымалла

Хальхи вӑрçӑ обстановкине пула чылай предприятисем, фабрикӑсемпе заводсем, артельсем васкавлӑ заказсем илнӗ. Çав заказсене срокра пурнӑçласа пырасси чи малтан график тӑрӑх ӗçлеттинчен килет.

XVIII-мӗш партконференцире Маленков юлташ промышленность предприятийӗсенче плана тултарса пырас тӗлӗшпе çапла каланӑ: «Предприятисен ӗçӗнчи плансӑрлӑха, продукцие пӗртан мар кӑларса тӑрассине, предприятисен ӗçӗнчи штурмовщинӑна пӗтерес пулать тата производствӑллӑ программӑна кашни завод, фабрика, шахта, чугунçул малтанах туса хатӗрленӗ график тӑрӑх кунсерен тултарса пымалла тӑвас пулать».

Çак паха кӑтартусем хальхи вӑхӑтра уйрӑмӑнах пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраççӗ. Халӗ кашни предприяти, кашни артель производство программине кулленех ирттерсе тултарса пыни кирлӗ. Çавӑнпа та кашни предприятин, артелӗн, кашни цехӑн, кашни бригадӑн ӗç графикӗ пулмалла. График хӑш цех, хӑш бригада, хӑш станок мӗн чухлӗ продукци туса кӑлармалла пултарассине палӑртса тӑрать. Çавна пула вӑл пысӑк ӗçентерӳсем туса ӗçлеме пулӑшать.

Çӗмӗрле районӗнчи «Верхняя Кумашка» промартельте графикпа ӗçлесе пырассине лайӑх организациленӗ. Васкавлӑ заказсене пурнӑçлас тӗлӗшпе артель председателӗ Елюков юлташ уйрӑмах тӑрӑшса ӗçлет. Вӑл график пурнӑçланса пынине кулленех тӗрӗслесе тӑрать, кая юлакан цехсене пур майсемпе те малтисемпе танлашма пулӑшать. Шупашкар районӗнчи урапа çуна тӑвакан артель те малтанах хатӗрленӗ график тӑрӑх ӗçлесе пысӑк çитӗнӳсем тӑвать. Артель председателӗ Корнилов юлташ çак артельте темиçе çул ӗçлет. Вӑл технологи процесӗсене лайӑх вӗренсе çитнӗ. Вӑл артельре пысӑк йӗркелӗх туса хунине пула, кунта васкавлӑ заказсене ялан вӑхӑтра пурнӑçласа пыраççӗ. 1941 çулта артель васкавлӑ заказсене вӑхӑтра пурнӑçласа, планран ытлашши 120 пин тенкӗлӗх продукци туса панӑ. Артельри мастерсем П. Наумов, М. Федоров тата ыттисем те уйӑхра 1000—1100-шер тенкӗ ӗçлесе илеççӗ.

Анчах графикпа ӗçлесе пырассине чылай артельсем йӗркелесе яман-ха. Çӑмахран, Шупашкарти «Красный мебельщик» артель руководителӗсем хальхи вӑхӑтра график тӑрӑх ӗçлени мӗнтери пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине халӗ те ӑнланаймаççӗ. Артель руководителӗсем: график тӑрӑх ӗçлесе пыма пире топливо çукки чӑрмантарать, тесе лараççӗ. Анчах артель валли топливӑна камӑн хатӗрлесе памалла пулнӑ-ши?

Канаш районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан артельре те график тӑрӑх ӗçлессине ятпӑх организациленӗ. Кунта вунӑ кунлӑх графиксем туса цехсене параççӗ. Анчах пур цехсенче те çав графиксем çителӗклӗ пурнӑçланса пымаççӗ. Артель руководителӗсем цехсен ӗçне куллен тӗрӗслесе графика пурнӑçлама пулӑшмаççӗ.

Графика кашни кунах тултарса пырас тесен, артельре большевикла йӗркелӗх тӑвас пулать. Лайӑх хозяйственник хӑйне шанса панӑ артельре кашни кун мӗн пулса пынине тӗплӗн пӗлсе тӑрать, ӗçре мӗнле чӑрмавсем пулассине малтанах сиссе, ӑна вӑхӑтра сирсе яма тӑрӑшать.

Кучухнехи вӑрçӑ обстановкинче пирӗн промышленноçпа унӑн мӗнпур отраçлӗсем умӗнче ответлӑран та ответлӑ задача тӑрать 1942 çулта пирӗн промышленноçра тата транспортра кая юлса пыракан пӗр предприяти те пулмалла мар, пур заводсем те, фабрикӑсем, чугунçулсем, артельсем плана ирттерсе тултарса пымалла.

Парти организацийӗсен производствӑллӑ плансене пурнӑçа кӗртме промышленноçпа транспорт руководителӗсене куллен пулӑшса пымалла, предприятисемпе артельсенчи çитменлӗхсене çийӗнчех пӗтерме тӑрӑшмалла.

XVIII-мӗш партконференци «плана предприяти тӑрӑх, халиччен пулнӑ пек вӑтамран илсе çеç мар, ӑна кашни кун, кашни цехра, кашни бригадӑра, кашни станок çинче, кашни сменӑра тултарса пымалла», тесе каларӗ. Çак сӑмахсем пирӗн артельсем мӗнле ӗçлемеллине кӑтартса параççӗ. Плана пурнӑçа кӗртес ӗçре артельсем график тӑрӑх ӗçлени пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать.

Пирӗн промышленность предприятийӗсемпе артельсем вӑрçӑ пуçланнӑранпа сахал мар çитӗнӳсем турӗç. Анчах та çав çитӗнӳсемпе мӑнкӑмӑлланса татта лӑпланса лармалли вӑхӑт мар. Çавӑнпа та хамӑр тунӑ çитӗнӳсене куллен ӳстерсе пырса, пур çитменлӗхсене те пӗтерме тӑрӑшмалла, хамӑрӑн резервсене пӗтӗмпех тӑшмана çӗнтерес ӗçе ямалла.

Февралӗн 15-мӗшӗнче—комсомолецсемпе çамрӑксен тӑваттӑмӗш воскресникӗ

Комсомол организацийӗсем ыйтнипе килӗшсе, ЦК ВЛКСМ Хӗрлӗ Çар 24 çул тултарнӑ ятпа февралӗн 15-мӗшӗнче комсомолецсемпе çамрӑксен тӑваттӑмӗш воскресникне ирттерме йышӑннӑ. Воскреснике заводсенчи, колхозсенчи çамрӑксем, шкулсенче, техникумсенче вӗренекенсем, учреждениссенчи служащисем хутшӑнаççӗ. ВЛКСМ райкомӗсен воскресник участникӗсем валли 8 сехетлӗх ӗç тупса хатӗрлесе хумалла. Ялта районсенче воскресник çуракине хатӗрленес тӗлӗшпе пулса иртет. Ялхуçалӑх машинисемпе инвентарӗсене, тракторсене юсасси, вӗсем валли запаслӑ пайсем тупасси, уйра юр тытасси, удобрени пухасси, вӑрлӑхсене сортласа хатӗрлесси ялсенчи çамрӑксен тӗп ӗçӗ пулса тӑрать.

Воскресникре ӗçлесе илнӗ укçа Ленинла—Сталинла комсомол ячӗпе тӑвакан танковӑй колоннӑна тунӑ çӗре каять.

Хӗрлӗ Çар 24 çул тултарнӑ ятпа пулакан воскреснике лайӑх хатӗрленсе кӑтартуллӑн ирттерни — социализмлӑ государствӑн оборонине тӗреклетессишӗн кашни предприятири, колхозри, учреждени комсомол организацийӗ тунӑ чыслӑ ӗç пулать.

П. МИХАЙЛОВ.
ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗн секретарӗ

Х а л ӑ х п у л ӑ ш ӑ в ӗ

ССР Союзӗнчи ӗççыннисем тӑван çӗршывшӑн нимӗн те шеллемеççӗ. Совет халӑхӗ халӗ, пӗр шухӑш-кӑмӑллӑ пулса, пӗтӗм вӑйне тӑшмана хирӗç кӗрешнӗ çӗре парса ӗçлет.

Канаш районӗнчи ӗççыннисем отечественнӑй вӑрçӑ пуçланнӑранпа тӑван çӗршыв оборонин фондне 632.873 тенкӗ укçан, 523.605 тенкӗлӗх заем облигацийӗсем хывнӑ. Вӑл шутра вагонсем юсакан завод коллективӗ—227.791 тенкӗ, чугунçулӑн 5-мӗш дистанцинче ӗçлекенсем — 52.367 тенкӗ, инвалидсен «Красный воин» артель коллективӗ—9.818 тенкӗ панӑ.

Хӗрлӗ Çара пӗтӗм чун-чӗререн юратнине пирӗн ӗççыннисем çӗнӗ çул умӗнхи кунсенче татах та тепӗр хут кӑтартрӗç. Районри 45 организаци фронтовиксем патне çӗнӗ çул ячӗпе хаклӑ парнесем янӑ.

Фронтовиксем валли ӑшӑ тумтирсем пухса парасси ӗççыннисен чыслӑ та мухтавлӑ ӗçӗ пулса тӑчӗ. Хӗрлӗ Çар XXIV çул тултарас кун çывхарса килнӗ май çак ӗçе районри ӗççыннисем татах та вӑйлатрӗç. Нумаях пулмасть районри склада Асхва ялсоветӗнчи колхозниксем 40 тир, 10 килограмм çӑм, 4 çӗлӗк, Анаткас Ухсырма ялсоветӗнчи колхозниксем 38 тир, 8 килограмм çӑм, Вӑтапуç ялсоветӗнчи колхозниксем 24 тир, çӑм, алшишсем, çӗлӗксем, тӑласем чылай леçсе пачӗç.

Хӗрлӗ Çар боецӗсем валли ӑшӑ тумтирсем пухас ӗç уйрӑмах вагонсем юсакан заводра лайӑх пулса пырать. Юлашки кунсенче кӑна рабочисемпе служащисем кунта 2 фуфайка, 2 шалавар, 13 тир, 6 мулаххай, 4 алшӑлли, 120 мӑшӑр перчатка, 8 мӑшӑр чӑлха тата ытти япаласем пухса пачӗç.

Тӑван çӗршыва паттӑррӑн хӳтӗлекенсене ӑшӑ тумлантарас тӗлӗшпе «Красный воин» артельре ӗçлекенсем те лайӑх пример кӑтартаççӗ. Çӗнӗ çулччен вӗсем ватӑ хурса çӗленӗ 72 пиншак, 68 шалавар, 58 çӗлӗк, 12 мӑшӑр çӑматӑ, 20 алшӑлли, 4 мӑшӑр алшиш тата ыттисене те хатӗрлесе панӑ. Артельре ӗçлекен хӗрарӑмсемпе хӗрачасем халӗ татах 100 мӑшӑр перчатка çыхса парӗç.

Çичӗ уйӑх хушшинче районри ӗççыннисем Хӗрлӗ Çар чаçӗсене пурӗ ват кӑ хурса çӗленӗ 208 пиншак, 284 шалавар, 122 кӗрӗк пиншак, 5 тӑлӑп, 578 мӑшӑр çӑматӑ, 1.147 мӑшӑр перчаткӑсемпе алшишсем, 488 мӑшӑр нускисемпе чӑлхасем, 792 мулаххай, 424 алшӑлли, 180 сӑнтер, 140 комплект ӑшӑ кӗпе-йӗм, 356 мӑшӑр тӑла, 196 шарф, 12 одеяло тата ытти ӑшӑ япаласем нумай ярса панӑ.

Çак цифрӑсем пирӗн ӗççыннисем Хӗрлӗ Çара чӗререн юратса, пулӑшса тӑни çинчен калаççӗ. Хӗрлӗ Çара мӗн кирлине пурне те памалла!—акӑ мӗншӗн кӗрешеççӗ халӗ пирӗн çынсем.

Т. ИВАНОВ.

Хӗрлӗ Çар валли ӑшӑ тумтирсем пухрӑмӑр

СОВЕТСКОЕ. Эпир, Чапаев ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем, хамӑрӑн ӗçе татах та вӑйлӑнрах туса пынипе, ирсӗр тӑшмана пӗтерсе тӑкма Хӗрлӗ Çара пулӑшатпӑр. Тӑван Хӗрлӗ Çар боецӗсем валли эпир татах 10 мӑшӑр çӑматӑ, 6 кӗрӗк-пиншак, 35 тир, 20 мӑшӑр алшиш, 10 мӑшӑр чӑлха, 50 мӑшӑр ӑшӑ кӗпе-йӗм патӑмӑр.

Эпир, колхозниксем, Хӗрлӗ Çарпа Тинӗс-Çар Флотӗн боецӗсене пирӗн çӗршыва чуралантарас шутпа сӗмсӗрленсе килнӗ нимӗç оккупанчӗсене пӗр çын юлмиччен вӗлерсе пӗтериччен вӑйлӑн пулӑшса пыма тупа тӑватпӑр.

И. ИЛЮШИН.

Йӗлтӗрçӗсен кросне хатӗрленетпӗр

ЕЛЧӖК. Районри çамрӑксем Хӗрлӗ Çар 24 çул тултарнӑ ятпа пулса иртекен профсоюз членӗсемпе комсомолецсен кросне пысӑк хавасланӑхпа кӗтсе илеççӗ. Халь районра кроса хатӗрленес ӗç анлӑн саралса кайрӗ. Походсем, ӑмӑртусем, тренировкӑсем туса ирттереççӗ.

Кроса хатӗрленсе ирттерес ӗçре райцентрти сӗтел-пукансем тӑвакан мастерской пысӑк та кирлӗ пулӑшу парать. Кунта йӗлтӗрсем тума пуçларӗç. Паянхи куна 500 мӑшӑр ытла йӗлтӗр туса кӑларнӑ та ӗнтӗ. Кунсӑр пуçне комсомолец-çамрӑксем, кроса хатӗрленнӗ май, хӑйсем валли хӑйсемех йӗлтӗрсем тӑваççӗ. Çаксем ӗнтӗ çамрӑксене кроса ытларах явӑçтарма май параççӗ.

Кроса хатӗрленесси уйрӑмӑнах НКВД-ӑн районри отделенийӗнче ӗçлекенсем хушшинче (комсомол комитечӗн секретарӗ Никонов) лайӑх пырать. Кунта йӗлтӗрпе çӳреме вӗренес тӗлӗшпе час-часах хӑнӑхуллӑ ӗçсем туса ирттереççӗ. Вӗсем ялсене те йӗлтӗрсемпе каяççӗ.

Кушкӑри туллимар вӑтам шкулта вӗренекенсем те кроса начар мар хатӗрленеççӗ. Кунти учитель Е. Байдуганов вӗренекенсемпе час-часах йӗлтӗрлӗ походсемпе ӑмӑртусем туса ирттерет. 138 çамрӑк йӗлтӗрпе лайӑх çӳреме вӗренсе çитнӗ. Аслӑ Таяпари вӑтам шкулта вӗренекенсем те ыттисенчен юлмаççӗ. 78 вӗренекен хӑйсем валли килӗсенчех пӗрер мӑшӑр йӗлтӗр туса хатӗрленӗ. Вӗренекенсем уроксем хыççӑн, пушӑ вӑхӑтсенче, сырма-çатрасем, хирсем тӑрӑх йӗлтӗрпе ярӑнаççӗ. Кунта вӗренекенсенчен 105 çын кроса хутшӑнать. Тӑрмӑшри туллимар вӑтам шкулта вӗренекенсем те кроса хатӗрленнӗ май 45 мӑшӑр йӗлтӗр туса хатӗрленӗ.

Комсомолӑн колхозсем çумӗнчи организацийӗсем те кроса лайӑх кӗтсе илсе ирттерессишӗн тӑрӑшаççӗ. Йӗлтӗрсем çине тӑрса походсемпе ӑмӑртусем тӑваççӗ. Ку тӗлӗшпе уйрӑмӑнах комсомолӑн «Трактор» тата Ленин ячӗпе тӑракан колхозсем çумӗнчи организацийӗсен лайӑх ӗçӗсене палӑртса хӑвармалла. Шӑмалакри «2-я пятилетка» колхозри комсомолецсем нумай çамрӑксене йӗлтӗрлӗ кроса явӑçтараççӗ. Кунта 40 мӑшӑр ытла йӗлтӗр тунӑ.

Йӗлтӗрлӗ кросс çывхарса çитнӗ май, походсем туса ирттересси анлӑн саралса кайрӗ. Нумаях пулмасть Елчӗкри вӑтам шкулта 8—10 классенче вӗренекенсем 80 ача 10 километрлӑ поход туса ирттерчӗç. Вӗсем пурте похода лайӑх вӗçлесе, кроса хутшӑнма пултарассине кӑтартса пачӗç. Çавӑн пекех çак кунсенче райцентрти 32 комсомолец 10 километрлӑ йӗлтӗрлӗ похода хутшӑнчӗç. Походра Горшков, Никонов, Демьянов, Алтынова тата Вилкова юлташсем хӑйсене уйрӑмӑнах палӑртрӗç, йӗлтӗрпе çӳрес ӗçӗн ӑсталӑхне кӑтартрӗç.

Районри çамрӑксем йӗлтӗр спортне юратаççӗ. Вӗсем, иртнӗ çулта Хӗрлӗ Çар 23 çул тултарнӑ ятпа пулса иртнӗ йӗлтӗрлӗ кроса лайӑх ирттерсе, республикӑра 2-мӗш вырӑн йышӑнчӗç. Районри çамрӑксем кӑçал та йӗлтӗрлӗ кроса отлично ирттерессишӗн тӑрӑшаççӗ. Халӗ нумай çамрӑксене медицина комиссийӗ витӗр кӑларнӑ, командӑсем туса йӗркеленӗ.

Çамрӑксем кроса йышлӑн хутшӑнса, хӑйсен паттӑрлӑхӗпе çирӗплӗхне татах та тепӗр хут кӑтартса парӗç.

И. ПЕТРОВ.

—о—

Трактор ӗçне вӗренеççӗ

СӖНТӖРВАРРИ. Машинно-тракторнӑй станцинче тата районри çӗрӗç пайӗнче ӗçлекенсем трактор ӗçне вӗренеççӗ. Унта агрономсем, зоотехниксем, политотделра ӗçлекенсем тата учительсем çӳреççӗ. Малтанхи занятисем январӗн 20, 23, 24-мӗш кунӗсенче пысӑк пахалӑхпа пулса иртрӗç. Вӗренекенсем 18 çын занятисене яланах вӑхӑтра çитеççӗ. Вӗрентекен калани тимлӗн итлесе лараççӗ, ӑнланман вырӑнсем пулсан, ыйтса пӗлме тӑрӑшаççӗ. Занятисем эрнере икӗ хутчен икшер сехет пулмалла. Çапла вара вӗренекенсем 45 сехет теорие вӗренмелле, 45 сехет практикӑра пулмалла.

Кружока çӳрекенсем хӑвӑртрах вӗренсе пӗтерсе, трактор çине ларас кӑмӑлпа çунса тӑраççӗ.

Г. ЗАКАМСКИЙ.

Государствӑна тырӑ сутаççӗ

КАНАШ. Вӑтакас-Татмӑш ялсоветне кӗрекен колхозсем тата колхозниксемпе колхозницӑсем государствӑна кооперация урлӑ тырӑ сутма тытӑнчӗç.

Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз государствӑна 60 центнер, Н. Данилов, Я. Тихонов колхозниксем пӗрер центнер, Е. Егоров, П. Ефимов, С. Данилов, Ф. Михайлова колхозниксем 50-шар килограмм тӗштырӑ сутрӗç. Çавӑн пекех «Динамо» тата «Парижская коммуна» колхозсем те государствӑна 30—35-шер центнер тырӑ сутрӗç.

Т. ТУРХАН.

ТАНЯ

1941 çулти декабрь уйăхĕнче, Петрищевра (Верея хули çывăхĕнче) нимĕçсем вунсакăр çулти хĕре—Мускав комсомолкине çакса вĕлернĕ. Çакса вĕлерес умĕн çав хĕр нимĕçсене: «Эпĕ Таня ятлă», тесе пĕлтернĕ. Ку ĕç Мускав умĕнче питех те пысăк хăрушлăх тăнă кунсенче пулса иртнĕ. Ун чухне Мускав, хăйсен ирĕкĕпе килĕшнĕ харсăр çамрăксене пухса, партизансен отрячĕсене пулăшма фронт урлă тăшман тылне ярса тăнă. Çав кунсенче Петрищевра тăкам Германи çарĕн полевой телефонĕн мĕнпур линийĕсене касса татнă. Нумаях та вăхăт иртмен, нимĕç çар чаçĕн витине вут тĕртсе янă. Унта вунтăхăр лаша çунса кайнă. Тепĕр кунне çак харсăр партизана тытнă. Ăна епле майпа тытнине Петрищеври колхозниксем салтаксем каласа панă тăрăх лайăх пĕлсе юлнă. Çак партизан питех те кирлĕ çар объекчĕ патнелле çывхарса пынă. Ун пуçĕнче çĕлĕк, çийĕнче ăшă тиртен çĕленĕ куртка, ватка пустарнă брюки, уринче çăматă, çурăм хыçĕнче сумка пулнă. Çар объекчĕ патне çитсен, çак çын аллинчи наганне хĕвне чикнĕ, сумкăран пĕр бутылка кăларнă, унăн пробкине уçнă та спичкăпа тивертсе ярас тесе пĕшкĕнсе ларнă. Анчах та çак вăхăтра ун патне часовой йăпшăнса пырса хыçалтан аллисемпе ярса тытнă. Партизан нимĕç салтакне тĕксе ывăтăнтарса янă та наганне туртса кăларнă, анчах пеме ĕлкĕреймен. Салтак ун аллинчи револьвере çапса ÿкерсе, тревога хускатса янă. Вара партизана çавăнтах ярса тытса офицерсем пурăнакан çурта илсе кайнă. Кунта вара çак партизан арçын мар, хĕрарăм, 18 çулти çамрăк хĕр иккенне пĕлнĕ. Вăл хĕр, çÿлĕ те яштака кĕлеткеллĕскер, пысăк хура куçлăскер пулнă. Арçынла кастарнă çÿçĕсене вăл хыçалалла тураса çÿренĕ.

Хĕре тытса килсенех нимĕçсем килхуçисене кухньăна тухма хушнă. Анчах нимĕçсем хĕре мĕнле ыйтусем парса тĕпчени, хĕр вăл ыйтусене хирĕç хăюллăн: «Çук, пĕлместĕп, каламастăп», тесе ответлени кухньăра та лайăх илтĕннĕ. Унтан шалта чĕн пиçиххисем шăхăрма пуçланă, — нимĕçсем партизанкăна хĕнесе асаплантарма тытăннă. Темиçе минутăран пĕр çап-çамрăк нимĕç офицерĕ шалтан кухньăна чупса тухнă та пуçне ик аллипе ярса тытса хутланса ларнă. Вăл мĕн допрос пĕтичченех çапла нимĕн хускалмасăр, куçне хупса, хăлхисене хупласа ларнă. Килхуçисем шутланă тăрăх, нимĕçсем Таньăна икçĕр хутчен чĕн пиçиххипе çапнă, анчах Таня çапах та пĕр сасă та кăларман. Палачсем хĕнеме чарăнсан вăл каллех: «Çук, пĕлместĕп. Каламастăп», тесе ответленĕ. Сасси кăна унăн малтанхинчен урмăшрах илтĕннĕ.

Допрос хыççăн Татьянăна Василий Александрович Кулик çуртне илсе кайнă. Ун çинче халь ни çĕлĕк, ни ăшă тумтир, ни çăматă пулман. Ăна конвойсем трусикпа аялти кĕпе вĕççĕн çеç илсе пынă. Таня кĕрпеклĕ юр çийĕн çара уранах утнă. Шала илсе кĕрсен, килхуçисем Таня çамки çинче кăвакарса кайнă хура çавраşка пуррине асăрханă. Унăн аллисемпе урисем те шăлтах кăвакарса юнăхса кайнă пулнă. Бандитсем хĕрĕн икĕ аллине хыçалалла туртса çыхнă. Шăлпа çыртса юнланса пĕтнĕ тутисем унăн пĕтĕмпех шыçса кайнă: вăл хăйне асаплантарнă чухне тутисене хăех çыртса суранласа пĕтернĕ пулмалла.

Хĕр пÿрте илсе кĕнĕ хыççăн вăрăм сак çине ларнă. Нимĕç часовойĕ алăк патĕнче тăнă. Унпала пĕрле тата тепĕр салтак пулнă. Василипе Прасковья Кулик арестантка çине кăмака çинчен сăнаса пăхса выртнă. Таня нимçталла хускалмасăр лăпкăн ларнă, унтан шыв пама ыйтнă. Василий Кулик кăмака çинчен анса хĕре шыв пама тăнă. Анчах ăна часовой аяккалла тĕртсе янă та: «Санăн та патак çиессÿ килет-им?» тесе ыйтнă.

Çак çуртра пурăнакан салтаксем хĕре çавăнтах хупăрласа илнĕ те, унтан тискер сасăпа мăшкăлласа кулса тăрăхлама пуçланă: хăшĕсем ăна чышкăпа чыша-чыша илнĕ, хăшĕсем спичка çутса янаххине пĕçертнĕ, пĕр салтакĕ тата унăн çурăмне пăчăкăпа сăптăрса илнĕ. Мĕн киленичченех ашкăннă хыççăн салтаксем çывăрма выртнă. Часовой винтовкине алла тытнă та Таньăна пÿртрен тухма хушнă. Вăл çамрăк хĕре урам хушшинелле, штык вĕçĕпе çурăмран тĕртсе уттарса пынă. Унтан вăл: «Цурюк» тесе кăшкăрнă та хĕре тепĕр еннелле илсе кайнă. Часовой ăна мĕн хăй шăнса кÿтсе кайиччченех çапла çарран, аялти кĕпе-йĕм вĕççĕн уттарса çÿренĕ. Ку часовой Татьянăна 10 сехетрен пуçласа çурçĕр иртсе 2 сехетчен хураллана. Çак хушăра вăл Таньăна кашни çур сехет, пĕр сехет хыççăнах урама илсе тухса 15—20 минута хушши çатта-çарамас уттарса çÿренĕ. Юлашкинчен çак бандита урăх часовой килсе улăштарнă. Телейсĕр хĕре тăрăх сак çине выртса канма ирĕк панă. Темĕнле самантра Прасковья Кулик хĕрпе сăмахлама тытăннă:

— Эсĕ ăçтисем пулатăн? — тесе ыйтнă вăл.

— Сире мĕн тума кирлĕ вăл? — тавăрнă Таня.

— Хăш хуларан эсĕ? — ыйтнă каллех килхуçи хĕрарăмĕ.

— Мускавран.

— Аçу-аннÿсем пур-и?

Хĕр нимĕн те ответлемен.

Вăл ирччченех нимĕн хускалмасăр урăх пĕр сăмах шарламасăр, асапланса йынăшмасăр-тумасăр выртнă. Унăн урисене иккĕшне те тăм илнĕ пулнă, çавăнпа вăл асапланмасăр пултарайман. Çывăрнă-и çак çĕр çамрăк хĕр, е çук, мĕн çинчен шухăшласа выртнă вăл, тискер тăшман аллине лекнĕскер,— ун çинчен никам та каласа пама пултараймасть.

Ирхине салтаксем ял варрине такан туса лартма тытăннă. Прасковья каллех çак хĕрпе сăмахлама пуçланă:

— Ĕнер вут тĕртекенни эсĕ пулнă-и вăл?

— Эпĕ. Нимĕçсем çунса кайрĕç-и?

— Çук.

— Шел. Мĕн çунчĕ?

— Утсем çунса кайнă, тет. Тата хĕçпăшал тавраşĕ çуннă тесе калаçаççĕ.

Ирхине вунă сехетре хĕр патне офицерсем пынă. Вĕсенчен асли Татьянăран вырăс чĕлхипе:

— Калăр, кам эсир? — тесе ыйтнă.

Татьяна нимĕн те ответлемен.

— Калăр, ăçта пурăнать Сталин?

— Сталин хăйĕн пысăк ĕçĕнче, — тенĕ Татьяна.

Допрос мĕнпе пĕтнине килхуçисем илтеймен. Вĕсене пÿлĕмрен кăларса янă та допрос пĕтнĕ хыççăн кăна каялла кĕртнĕ. Комендатурăна Татьянăн хăшпĕр япалисене илсе килнĕ: жакетне, брюкине, чăлхисене. Унăн çĕлĕкĕ, ăшă тиртен тунă куртки, çăматтисем «çухалнă»: вĕсене унтер-офицерсем хăйсем хушшинче пайласа илнĕ. Çавăнтах Таньăн походнăй сумки выртнă; унта бензин тултарнă бутылкăсем, спичка, наган патронĕсем, сахăр тата тăвар пулнă. Татьянăна тумланма хушнă. Килхуçисем ăна кăвакарса имресе кайнă урисене чăлха тăхăнма пулăшнă. Татьянăн кăкри çине хăйĕн сумкинчен тупнă бензин бутылкине тата «Партизан» тесе çырнă хăма татăкĕ çакса янă. Çапла çипуçпа ăна площаде такан патне илсе кайнă. Таньăна çакса вĕлермелли вырăна вунă юланутлă салтак, шашкисене хатĕр тытса, йĕри-тавра хураллаcа тăнă. Çавăнтах çĕре яхăн нимĕç салтакĕсем тата темиçе офицер тăнă. Таньăна мĕнле çакса вĕлернине вырăнти халăха пурне те пăхса тăма хушнă. Анчах та халăх нумай пухăнман; пухăннă пеккисем те кăштах пăхса тăркаланă та, çак тискертен те тискер ĕçе куçпа курас мар тесе, вăрттăн шăвăнашăвăна килĕсене саланнă. Такан урлуççийĕ айне нимĕçсем икĕ ещĕк айлăн-çийлĕн майлаштарса лартнă. Татьянăна çав ещĕксем çине çĕклесе улăхтарса тăратнă та мăйне касмăк тăхăнтарнă. Офицерсенчен пĕри, çамрăк партизанкăна епле çакса вĕлернине ÿкерсе илес тесе, хăйĕн фотоаппаратне майлаштарма пуçланă: нимĕçсем çынсене вĕлернипе экзекуци картинисене ÿкерсе илме питĕ юратаççĕ. Командир палачсене кăштах тăхтаса тăма паллă панă. Татьяна çак самантпа усă курса колхозниксем еннелле çаврăннă та, вĕсене хытă кăшкăрса çапла чĕнсе каланă:

— Эй, юлташсем, мĕн салхуллăн пăхатăр? Хăюллăрах пулăр! Çапăçăр! Кун ан парăр нимĕçсене! Вĕлерĕр, çунтарăр, шăлт тустарса пĕтерĕр!

Çывăхра тăракан офицер, те Таньăна çапас тесе, те ун çăварне хупласа хурас тесе, аллине хăмсарса янă. Анчах Таня унăн аллине аяккалла тĕртсе янă та татах та янравлăраххăн кăшкăрма пуçланă:

— Вилĕм мана пĕртте хăратмасть, юлташсем! Тăван халăхшăн вилни — вăл вилĕм мар, телей кăна!

Фотограф такан хушшинчи хĕре мал енчен ÿкерсе илнĕ те тата аякран тепĕр хут ÿкерсе илме хатĕрленнĕ. Палачсем комендант çине шиклĕн пăхкалама пуçланă, вара комендант фотографа: «Хăвăртрах!» тесе кăшкăрнă. Татьяна комендант еннелле çаврăннă та, комендантпа салтаксене çапла калама пуçланă:

— Эсир мана халĕ çакса вĕлеретĕр, анчах эпĕ пĕччен мар, ман пеккисем — 200 миллион! Вĕсене пурне те çакса пĕтерейĕмĕр! Тавăрĕç сире маншăн! Салтаксем! Халĕ, вăхăт иртмен пек чух, хăвăртрах тыткăна парăнăр. Пурĕ-пĕрех çĕнтерÿ пирĕн алăра пулать! Сире те тавăрĕç маншăн!

Площадьре тăракан вырăс çыннисем куççулĕсене чараймасăр макăрнă. Хăшпĕрисем халь пулса иртес хăрушă ĕçе куçпа курас мар тесе, такан еннелле çурăмпа çаврăнса тăнă. Палач вĕрене туртнă та Таня мăйне касмăк пăвма пуçланă. Анчах та Таня вăл касмăка икĕ аллипе туртса аслăлатнă та, чĕввĕн тăрса, юлашки сассипе çапла кăшкăрнă:

— Сывă пулăр, юлташсем! Çапăçăр, ан хăрăр! Пирĕнпе Сталин! Сталин килет!

Палач тимĕр таканлă пушмакĕпе ещĕке хирнĕ те, аялти ещĕк яка юр тăрăх шуса кайнă. Çиелти ещĕкĕ çĕр çине кĕмсĕртетсе ÿкнĕ. Пăхса тăракан халăх шартах сикнĕ; тахăшĕ сухăрса йĕрсе яни илтĕннĕ, унтан вăл сасă та таçта аякка, вăрман уçланкинелле кусса кайса илтĕнми пулнă...

Вăл фашистсен тыткăнĕнче, фашистсен таканĕ хушшинче пурнăçне сухатнă, анчах хăйĕн асапĕсене пĕр сасăпа та кăтартман, хăйĕн юлташĕсене тăшмана тытса паман. Асаплă вилĕме вăл героиня пек, никам çĕнтерейми аслă халăхăн чи шанчăклă хĕрĕ пек йышăннă.

Унăн чаплă ячĕ халăх хушшинче ĕмĕртен ĕмĕре пырĕ!

Çĕнĕ çул касĕ ĕççе супнă фашистсем такан хушшинче çакăнса тăракан хĕр виллине хупăрласа илнĕ, ун çинчи тумтирĕсене хывса илнĕ, унăн ÿтĕнчен ирсĕррĕн мăшкăлланă. Ăна кинжалсемпе касса çурса, чиксе шăтарса пĕтернĕ. Унăн ÿчĕ ял хушшинче тата тепĕр кун хушши çакăнса тăнă. Январĕн 1-мĕшĕнче фашистсем такана пăчкăпа касса яма хушнă. Староста çынсене чĕнсе пуçтарнă та, вĕсем ял аяккине, шăннă çĕре чавса шăтăк алтнă. Таньăна нимĕнле хисепсĕм тумасăрах ял тулашĕнчи çав шăтăка, ватă хурăн айне пытарнă. Унăн масарне хĕллехи çил-тăман шурă пĕркенчĕкпе витсе хунă.

Часах ку яла пирĕн Хĕрлĕ Çар чаçĕсем килсе çитнĕ. Таня вĕсемшĕн хĕвеланăçнелле çул уçакансенчен пĕри пулнă, çак ĕçшĕн чаплă вилĕмпе вилнĕ.

Ку ял витĕр иртекен боецсем кашни канма ларнассеренех Таня масарĕ патне пырĕç те унăн ятне асăнса пĕтĕм вырăс халăх чĕринчен спаçипă калĕç; вĕсем Таня ашшĕ-амăшне те, çакăн пек героиня çуратса ÿстернĕшĕн, унăн учителĕсемпе юлташĕсене те, çавăн пек çирĕп чĕреллĕ пулма вĕрентсе ÿстернĕшĕн пĕтĕм чун-чĕреренех тав тăвĕç.

Пĕтĕм Совет çĕршывĕ тăрăх янраса кайĕç унăн нихăçан тĕксĕмленми мухтавĕпе чапĕ. Миллион çынсем чи таса та ăшă кăмăлпа астуса пурăнĕç таçтааякра шурă юрпа витĕнсе выртакан пĕчĕк масар тăпри çинчен. Хăйĕн шанчăклă хĕрĕ çинчен Сталин юлташ хăйĕн шухăшĕпе кăмăлĕнче яланах аса илĕ.

И. ЛИДОВ.
(«Правда»)

Государство умĕнче парăмлă юлмалла мар

ШĂХАСАН. Çĕнĕ Чалкасси ялсоветне кĕрекен «Новая жизнь» колхоз, 1941 çулшăн государство умĕнчи мĕнпур обязательствăсене ытлашшипех тултарса, 1942 çулшăн та аш-какай 100 процентчĕпех парса татрĕ. Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхоз 1942 çулшăн 27,15 центнер аш-какай пачĕ. Çавăн пекех Çĕнĕ Мами ялсоветĕнчи Ворошилов колхоз, Шăхасан ялсоветĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз тата «Борец», «ЧувашЦИК», «Победа» колхозсем те государствăна 1942 çулшăн 8—12-шер центнер аш-какай пачĕç.

Государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçланипе çак колхозсем çĕршывăн хăватне ÿстерсе пыраççĕ. Çакăнпа пĕрлех районра государство умĕнчи парăмсене вăхăтра татман колхозсем те чылай-ха. Хăшпĕр колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене иртнĕ çулшăн та пурнăçламан. Вăрман Енĕшри «Свобода» колхоз государствăна иртнĕ çулшăн 9,95 центнер аш-какай, 97 литр сĕт, Çĕнĕ Чалкасси ялсоветне кĕрекен Ильич ячĕпе тăракан колхоз 14 центнер аш-какай, 1452 литр сĕт, 132 центнер тырă парса татман. Çавăн пекех Матшÿри «Молодой колхозник», «Красный луч» тата Максим Горький ячĕпе тăракан колхозсем те çак ĕçре кая юлса пыраççĕ. Çав колхозсен руководительсем ответлă ĕç çине çителĕклĕн çаврăнса пăхмаççĕ.

Малта пыракан колхозсен примерĕпе кашни колхоз государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçлама, çĕршыва, фронта пулăшса пыраccине татах та ытларах вăйлатма тивĕçлĕ.

В. ЯКОВЛЕВ.

МТС мастерскойĕнче

ВĂРНАР. Колхозсем ун чухне хăшĕсем уйра ĕçленĕ, хăшĕсем уйри ĕççене вĕçлесе итемсем çинче ĕçлеме тытăннă.

Çав вăхăтрах МТС-ăн старший механикĕ Ремизов тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе пуçарса янă. Ун чухнех МТС мастерскойĕнче тракторсен пайĕсене çĕнĕрен тума, çĕнетмеллисене—çĕнетме, хăшпĕр тракторĕсене тĕпренех юсама тытăнчĕç.

Çапла вара кăçалхи çула çитсе кĕнĕ тĕле МТС-ăн чылай тракторĕсем юсавлă пулчĕç. Январĕн 21-мĕш тĕлне шурĕ 34 трактор юсанă. Халь юлашки 7 трактора юсаççĕ.

Тракторсене юсанипе пĕрлех ытти ялхуçалăх машинисене те юсаççĕ. Комбайнсемпе молотилкăсене 12 машина юсамалла пулнă пулсан, халĕ 6 машина юсанă, 63 плугран 26 плуг, 13 сеялкăран 9 сеялка юсаса пĕтернĕ.

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене уйрăмах Николаевпа Кириллов бригадисем тăрăшса юсарĕç, МТС-ăн механикĕ Ремизов вĕсене куллен пулăшса, вĕрентсе пычĕ. МТС директорĕ Осипов юлташ та вĕсене нумай пулăшрĕ. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене мĕнле юсанине вăл куллен тĕрĕслесе тăчĕ.

Çапла вара Вăрнар МТС-ĕн тракторĕсем юсавлă, ытти ялхуçалăх машинисене те кĕçех юсаса çитереççĕ.

Н. ЗАХАРОВ.

Америка флочĕ Германин подводнăй лодкисене хирĕç кĕрешни

ВАШИНГТОН, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тинĕс ĕçĕсен министерстви заявлени пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Атлантикăри çыранĕсем çывăхĕнче Америка флочĕ Германин хăшпĕр подводнăй лодкисене пĕтерсе тăкнă е тытса илнĕ. Анчах та министерство ку ĕçсем çинчен халех тĕплĕнрех пĕлтерме чаранса тăрать. Çавăн пек пĕлтернипе противник усă курма пултарас вăхăт иртсенех, министерство çав ĕçсем çинчен халăха тĕплĕнех пĕлтерет. Тинĕсри вăрçă операцийĕсем çинчен калакан мĕнпур информацие те министерство çирĕп вăрттăнлăхра тытма чĕнет. «Гитлеровецсен подводнăй лодкисем çинчен никама та пĕр хыпар та пĕлтермесĕр тăни гитлеровецсене çапса хуçма Америка халăхне пулăшать, вĕсем хăйсене ытлашши пысăка хурса шутланине нумай чакарать», тенĕ заявленире.

Англи флочĕ противникăн подводнăй лодкисене хирĕç кĕрешни

ЛОНДОН, январĕн 27-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонра тинĕс ĕçĕсен министрĕ Александер тухса каланă. Вăл çапла пĕлтернĕ: Англи карапĕсем противникăн подводнăй лодкисене Англин официальнăй пĕлтерĕвĕсенче кăтартнинчен икĕ хут ытларах пĕтерсе пыраççĕ, тенĕ.

Австралия çар ĕçне вăйлатать

ЛОНДОН, январĕн 27-мĕш. (ТАСС). Австралин çар министрĕ Форд халăха пĕлтерме приказ пичетлесе кăларнă. Çав приказ тăрăх, пĕтĕм Австралия вăрçă вăрçма хатĕр тăмалла, вырăнти оборона отрячĕсене вăйлатмалла. Правительство шутланă тăрăх, Австрали çине çывăх вăхăтрах Япони тапăнма пултарать.

Италире нимĕç салтакĕсем алхасни

Германин çар командованийĕ приказ кăларнă, унта вăл Италире тăракан нимĕç салтакĕсене «граждăнла халăхпа йĕркеллĕрех пурăнма» хушать. Приказра «ÿсĕр нимĕç салтакĕсем граждăнсенчен мăшкăллаççĕ, хĕçпăшалпа законсăр усă кураççĕ тата частнăй çуртсене çĕмĕре-çĕмĕре кĕреççĕ», тесе йышăннă. (ТАСС).

Финлянди халăхне çаратаççĕ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). Финлянди çĕршывĕн мĕнпур фондне пĕтĕм хуçалăха юхăнтаракан вăрçăпа пĕтерсе тăкнă хыççăн Финлянди правительстви налогсене татах та ытларах хăпартса янă. Халĕ правительство учрежденийĕсенче халăха çаратмалли çĕнĕ плансем хатĕрлеççĕ. Çак кунсенче налогсене çĕнĕрен ÿстерсе ярасси çинчен пичет тÿррипех çырать. Налог тÿлекенсенчен налог шучĕпе вĕсен килти пурлăхĕсене те туртса илмелле пулать. Çав драконла йĕркесем Финлянди халăхне пĕтĕмпех тарăхтарса çитереççĕ.

«Шахеде Гамунас» хаçат çакна тÿррĕмĕнех йышăнса çапла çырать: налог хурасси ĕнтĕ тахçанах виçерен иртсе кайнă, ăна текех хăпартма юрамасть, тет. Хаçат налога малалла татах та хăпартса ярсан сиенлĕ кĕтмен ĕçсем сиксе тухасси çинчен асăрхаттарать.

Ливири вăрçă

ЛОНДОН, январĕн 27-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин вăрçă ĕçĕсен обозревателĕ çапла кăтартса парать: Англин юлашки вăхăтра кăларнă коммюникисем тăрăх пăхсан, Триполитани чикки патĕнче питĕ вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă. Çанталăк япăх тăнă пирки юлашки 15 кун хушшинче вăрçă ĕçĕсем кăшт лăпланнипе усă курса, Германи командованийĕ хăйĕн вăйĕсене çĕнĕлле йĕркелесе вĕсене Англин малти позицийĕсене хирĕç кăларса тăратма пултарнă. Противникăн çак операцийĕсем Соллум патĕнче пулса иртнĕ ĕçсене аса илтереççĕ. Кунта противник кĕтмен çĕртенех наступлени пуçласа ярса, хăйĕн войскисемпе Ливи территорине çитиех çĕмĕрсе кĕме пултарнăччĕ, çавнашкалах тата Тобрук патĕнче те Кăнтăр Африка войскисен нимĕç войскисем питĕ хытă хĕснине тытса чармалла пулнă.

Нимĕçсем танксемпе самолетсем тĕлĕшпе чылаях пысăк пулăшу илчĕç пулин те, англичансем сывлăшра пуçпулса тăни малалах ĕнтĕ, тет малалла обозреватель. Англин сывлăшри вăйĕсен командованийĕн юлашки вăхăтри коммюникисенчен ĕнтĕ Англин авиацийĕ çĕнтерÿсем туни, противникăн транспорчĕсем çине вăйлăн пыра-пыра çапни курăнса тăрать. Обозревателĕн шучĕпе, çапăçусем питĕ хăвăрт пулса пынине кура, Ливин çав районĕнчи лару-тăру мĕнле пуласси часах палăрмалла. Çитес çывăх кунсенчи ĕçсем противникăн вăйĕпе тĕллевĕсене кăтартса пама тивĕçлĕ.

Панă сăмаха пурнăçа кĕртеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Инвалидсен артелĕн коллективĕ 1941 çулта паллă çитĕнÿ тунă, вăл çултахăкри плана ытлашшипех тултарнă. Артель, чĕртаварпа перекетлĕн усă курса, чылай тупăш илнĕ, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетнĕ.

Çак результатсем чăн малтанах артель членĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва сарса пынинчен, правлени хăй енчен рабочисене лайăх ĕç условийĕсем туса панинчен килнĕ. Уйрăм заказсене тума материалсем çитмесен, вĕсене артель правленийĕ вырăнтах тупма тăрăшнă.

Артель коллективĕ 1942 çулта та начар мар ĕçлет. Коллектив, тунă çитĕнÿсене çирĕплетсе пырса, татах та ытларах ÿсĕмсем тăвассишĕн кĕрешет, ăмăртăва вăйлатса пырать. Хальхи вăхăтра производствăра ĕçлекенсенчен нормăна тултарса пырайманнисем çукпа пĕрех. Уйрăм стахановецсем ĕç тухăçлăхне 1,5—2 хут ÿстерсе ĕçлеççĕ. Сăмахран, Квятковская, Чиженкова, Герасимова, Маркелов юлташсем, вăтамран илсен, куллен икшер норма тăваççĕ. Ать-пушмак çĕлекен цехра уйрăмах Масленин юлташ паха тĕслĕхсем кăтартать. Вăл куллен нормăна 200—250 процент тултарать.

— Эпир хамăр умма сменăри нормăна куллен 2 хут иртерсе тултарас задача лартнă. Вăрçă вăхăчĕ çапла ĕçлеме ыйтать,—теççĕ артельри стахановецсем.

Нумаях пулмасть артельре пуху пулса иртрĕ. Ĕçлекенсем, пурте пĕр шухăш-кăмăллă пулса, Мускаври автозаводри çамрăксем чĕнсе каланине ырларĕç. Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Пĕрремĕш квартал планне срокчен тултарма пулса, хăйсем çине обязательствăсем илчĕç.

Производство планне тултарас, ĕç тухăçлăхне ÿстерес, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетес тĕлĕшпе Ширшов ячĕпе тăракан артель членĕсем те начар мар ĕçлеççĕ. Вĕсем хушшинче стахановла движени сарăлсах пырать. Артель коллективĕ тăван Хĕрлĕ Çар XXIV çул тултарнине ĕçре çитĕнÿсем тунипе паллă тума хатĕрленет. Вăл хăй çине февралĕн 23-мĕшчен 200 комплектран кая мар тумтирсем çĕлесе пама, 1-мĕш квартал планне 60 процент тултарма, чĕртавара тата топливăна 5 процент перекетлеме, ĕç тухăçлăхне 7 процент хăпартма обязательство илнĕ. Халĕ коллектив хăй çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçласа пырать.

Юлашки вăхăтра производствăра двухсотниксен йышĕ ÿсни, нормăна тултарайманнисен хисепĕ чакни уççăнах курăнчĕ. Стахановкăсем Ратниковӑпа Борисова нумаях та пулмасть нормăсене 180 процент таран тултарнă, халĕ вĕсем икшер хут, уйрăм кунсенче унтан та ытларах иртерсе тултараççĕ. Комсомолка Гущина, Пичугина тата Сидорова юлташсем хальхи вăхăтра нормăсене 150—180 процент тултарса ĕçлеççĕ.

— Эпир хамăр çине илнĕ обязательствăсене ытлашшипех пурнăçлассине шанатпăр, сăмах панă—вăл пурнăçламатех,—теççĕ стахановкăсем.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ XXIV çул тултарнине çакăр пĕçерекенсен коллективĕ те çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илет. Вăл 1941 çулти программăна ытлашшипех тултарса, планран иртерсе 202 пин тенкĕлĕх çакăр пĕçерсе кăларнă. Январь уйăхĕнчи результатсем те япăх мар; вăтамран илсен, çак коллектив кулленхи плана иртерсе тултарса пырать. Стахановецсем Емельянова, Бундина, Сырова, Гришин, Чернышев т. ыт. юлташсем те хăйсен ĕç нормисене 120—130 процент таран тултарса ĕçлеççĕ.

Çĕмĕрле районĕнчи промысла артелĕсем Хĕрлĕ Çар XXIV çул тултарнине çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе паллă тума хатĕрленеççĕ. Вĕсем стахановла ĕçленипе, ытларах продукци туса кăларнипе фронта пулăшаççĕ.

Х. ЛИСИН.

Çамрăк хĕрĕн бригади

ЕТĔРНЕ. Ăна, 16 çулти çамрăк хĕре—Козловăна, çара тухса кайнă Федор Родионов бригадир вырăнне лартнă. Бригада ĕçĕ малтанах ăна шиклентернĕ. Бригада ĕçĕ уншăн — çĕнĕ те ответлă ĕç. Паллах, йывăрлăхсăр пулма пултарайман. Нимрен малтан колхозниксем ĕçе калкал тухманни ăна пăшăрхантарнă. Тухаканнисем те ăна, çамрăкскерне итлесшăн пулман.

Çапах та Козлова ĕмĕтĕнчен таталман. Хăйĕн ĕçне вăл Родионова ăсатсан тепĕр кунĕнче хĕç хутассинчен пуçарса ячĕ. Çав кун кунĕпех вăл колхозницăсемпе пĕрле ĕçлерĕ. Ĕç ăнăçлăн вĕçленчĕ. Унăн бригади çав ĕçе никамран малтан туса пĕтерчĕ, каярах вара государствăна сĕс парас тĕлĕшпе те колхозри ытти бригадăсенчен мала тухрĕ.

Ытти ĕçсене те Козлова çавăн пекех туса пычĕ. Пĕр-пĕр ĕçе тума тытăнсан—вăл хăй çав ĕçĕн ăшĕнче, хăй вăл колхозниксене пример кăтартать. Çапла ĕçлесе унăн бригади пур ĕçсенче те ăнăçлăн ĕлкĕрсе пыра пуçларĕ. Никăш бригадăран малтан кĕлте кĕртсе капансене хывса пĕтерчĕ те авăн çапма пуçларĕ.

Малтанах авăн çапас ĕç аванах пулса пымасчĕ. Козлова вара тимлесе тытăнчĕ. Кăнтăрла çапнипе пĕрлех каçхине те çапма пуçларĕç. Сивĕсем те кансĕрлемерĕç. Кунсерен 24 пăт çапас вырăнне 38-шар центнер çапакан пулчĕç. Çапла вара Козлова бригади колхозра чи малтан авăн çапса пĕтерчĕ.

Ĕçсене ăнăçлăн туса пынă май Козлова бригади государство умĕнчи парăмсене те вăхăтра парса татать. Çав вăхăтрах çуракине те хатĕрленет. Паянхи куна çитсе уя 40 лав тислĕк кăларнă, 15 гектар çинче юр тытнă. Халь бригада вăрлăхсем сортлать.

Ĕмĕтсем Козловăн пысăк — кăçалхи çуракине те вăл нихăш бригадăран малтан катĕрленсе çитсе, ăна ăнăçлăн иртерессишĕн тăрăшса ĕçлет, тăрăшса вĕренет. Хăй мĕн тăвас тенине вăл тăватех. Çавна «Победа» колхозри колхозниксем те шанаççĕ.

В. ЛАЗАРЕВ.

СУД

Çар ĕçне вĕренме йĕркеллĕ çÿременшĕн

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн постановленийĕ тăрăх, Сухайкасси (Канаш районĕ) ялçынни Сергей Александрович Александровăн обязательнăй йĕркене çар ĕçне вĕренме çÿремелле пулнă. Анчах вăл çар ĕçне вĕренессинчен пăрăнма шăхнă, занятисене йĕркеллĕ çÿремен. Нумай пулмасть, Канаш хулинчи 1-мĕш участокри халăх сучĕ çак ĕçе уçă заседанире пăхса тухрĕ. Обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕренме йĕркеллĕ çÿременшĕн С. А. Александрова 6 уйăх хушши ирĕксĕр ĕçлеттермелле, ĕç укçин 20 процентне тытса юлмалла турĕ.

(Хамăр информаци).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чувашский Государственный педагогический институт

об'являет

ДОПОЛНИТЕЛЬНЫЙ ПРИЕМ НА ЗАОЧНОЕ ОБУЧЕНИЕ ЗА ПЕДАГОГИЧЕСКИЙ И УЧИТЕЛЬСКИЙ ИНСТИТУТЫ,

ПО СПЕЦИАЛЬНОСТЯМ:

истории, русского языка и литературы, чувашского языка и литературы, естествознания и химии (за пединститут), естествознания и географии (за учительский институт), математики и физики.

АДРЕС: гор. Марпосад, Чувашский педагогический институт.

2—1 Дирекция.

Сурское агентство Верхне-Волжского речного пароходства

приступило к заключению договоров

с организациями на перевозку по рекам Суре и Волге грузов большой и малой скорости и леса в плотах в навигацию 1942 года.

Срок заключения договоров до 15 февраля.

Руководители заинтересованных организаций до указанного срока должны заключить с агентством договора.

АДРЕС: г. Алатырь, Чувашской АССР, Старо-Базарная площадь, дом 29.

Сурское агентство ВВРП-ва.

Требуется главный бухгалтер.

С предложениями обращаться по адресу: гор Чебоксары, ул. Калинина, 34, телеф. № 0-94.

Сельхозснаб.

Заводу требуются:

инженеры и техники-конструкторы и технологи по холодной обработке металла, инженеры и техники-калькуляторы, экономисты-плановики, статистик, секретарь-машинистка, машинистки, снабженческие складские работники, стеклографист, нормировщики, кассир-инкассатор.

Рабочие следующих специальностей:

токари, фрезеровщики, строгальщики, слесари, сверловщики, электро-монтеры, шлифовщики-заточники, шоферы 1 и 2 класса, авто-слесарь, жестянники, литейщики, модельщики, сварщики, прессовщики, штамповщицы, зачистчицы, намотчицы, машинист компрессора, наборщики типографии, гальваники, травильщики по металлу, слаботочники, радист, фотограф (по микроколлоидном. способу), ящечники-упаковщики, плотники, столяры, каменщики, возчики, шорник, печник, дворники, уборщицы, курьеры и подсобные рабочие.

Грузчикам и возчикам предоставляются общежития.
Вахтеры-охранники обеспечиваются теплой одеждой.

ОБРАЩАТЬСЯ: Отдел кадров,—Ленинградская ул., дом № 38, после 12 часов дня.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—67, экономика пайĕн — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн — 6—23. «Ленин çулĕпе» журналăн — 6—85, издательство конторин — 6—23.

НТ 32 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 260. Ф. 6. 58 84 п. л.